Георгий ФЕДОРОВ



# «ИНÇЕ ÇИНÇЕ УЙРА УЯР...»

*«Эп сăмах хăватне ĕненетĕп.»*

**П. Хусанкай.**

*«Пар, Çеçпĕл, хăв ака пуçне!»*

**П. Яккусен.**

Аслă поэтăмăр, манăçми Çеçпĕл йĕркипе статья ятне патăм, сăмахăма та çав сăвăранах пуçлам. «Инçе çинçе уйра уяр Карталанса чăлтăртатать, енчен енне çупса чупать...» Тем анлăш сăн, вĕççĕр-хĕрсĕр талккăш!.. Вăй питти çанталăк хĕм таппиллĕн выляни, хĕрӳ хаваспа, кĕреш халпа мал ĕмĕтленни... Епле хĕпĕртемĕн çавна кура тăркачă?! Епле чĕрене савнăçпа тултармăн?! «Чăваш çĕр урлă уйсенче Çĕн Сывлăш чун уçса вĕрет»; «Çĕн Кун килет»; «Пĕчик пӳртсемлĕ ялсенче», «Чăваш çĕрне тĕреклĕх кĕрет!..» Элле, çак сăвăра кăна-ши вăл панорамăн кунашкал хевти? Çук, «Тинĕсе» сăвă та çав ĕренкенех мала кăларнă: «Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм, Хуп-хуран, сип-симĕсĕн, Кăпăк тумлăн хумлăн, хумлăн, Çырана çапса, хăюллăн хумлă сулнăксемпе сулăн...» Кунта та — инçет, анлăлăх. Çĕн пурнăçшăн вăранас тĕнчен капашсăр, чиксĕр-паксăр вăй-хал чуппи. Тен, хастарлăхпа вĕриленнĕ, малашлăха шаннă авăксенче çеç çапла тĕвĕленет пулĕ сăвăçăн сăнарлăхĕ? Чăваш çĕрĕн нишлĕхне, инкекне сăнланă чух пачах писет-и, тен, художник кун пек сăрсенчен? Тĕслĕхсем илсе пăхăпăр ак — «Катаран кас килсен, каçхи кунăн мĕлки Уйсене ыйхăпа хупласан, Йĕркерен-йĕркерен тĕрлĕ шухăш йĕрки Пуçăма пуçтарна пуçласан...» Е çав хайлаври йĕркесемех акă: «Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хушшинче Чăваш çĕрĕ мана курăнать: Ман çĕр-шыв хĕрлĕ юнлă хĕрес çумĕнче Çыхăнса, çакăнса тăраять...» («Катаран кас килсен»). Унчченхи калăпах: «катаран...», «ĕлĕкхи ĕмĕрсен...» Тĕслĕхсен речĕ куçа тӳрех курăмлăн ӳкет: «инçе çинçе...», «катаран кас килсен...»; «вĕççĕр-хĕрсĕр...» Сăвăсенчи шухăш таппи-энергийĕ те çапларах — пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн тенешкел пухса пырать сăнарлăх хăй хевти-хĕрӳне. Калăплăн хивреленет, «кăвар кайăклăн» ӳсĕмленет, «хумлăн-хумлăн» кĕрешленсе пырать. Тинĕс кĕрлевĕ пек е чунăн ниçта кайса кĕме çук трагедийĕ-суранĕ евĕр килет таптаруллă сулăмсунăм... «Хутлăн-хутлăн» тени эреш хитришĕн çавăрнă сăмах мар. «Или! Или! Лима савахвани!..» сăввăн тытăмне шĕкĕлчесе пăхар-ха: шăпах «йĕркерен-йĕркерен» «пуçтарнать» «тĕрлĕ шухăш йĕрки» — пĕрин хыççăн тепри, умлăн-хыçлăн черетленсе: 1) «Пăталарĕç тăван çĕршыва»; 2) «Ăна йӳçĕ эрех ĕçтереççĕ»; 3) «Таврара хурахсем ахăраççĕ»; 4) «Тӳресем кăмăллăн кулкалаç»; 5) «Кăлкансем ахлатса пуç пĕкеççĕ»... Пĕр йышши пулăмсен пĕр черечĕ кăна-ха ку. Акă тепри: 1) «Пуш хирте пĕрпĕччен ун хĕресĕ»; 2) «Хупăнать, хупăнать куçĕ ун»; 3)«Çаруранлă çĕр-шыв макăрать-çке...» Кульминацийĕ вара — татса, чĕнсе калани, тăн-тăн пусса çутă малашлăха утма йыхăрни: «Янк уяр кĕрхи кас çĕр чĕтрерĕ, Çӳлтен мар, çĕртенех пĕр мăн сас: — Эй, эсир, выççисем, итлĕр! — терĕ, — Итлĕр кам пурăнмашкăн хавас!..» Хайхискер, шухăшĕ те тĕвĕленет хăех: инçет сулăмпа ахрăмланса килетмĕн Çеçпĕл сăввинчи сăнарлăх вăй-хакалĕ, панорама анлăшĕнчен сĕтек илет. Çапла кĕрнекленсе хаяр аслати кĕрленĕн хывăнать; иртнĕ самана тӳнтерне «аçа çапнин» хайланать. «Çĕнĕ Кун аки» пулса «Чăваш уйне ака тума тухать»... Мĕн пурĕ ку — çĕнелӳ кăна мар, аркану трагедийĕ те, çĕннин çуралу ыратăвĕ те. Трагедие, панорамăллă çĕнелĕве туйнă-сиснĕ лирика геройĕ вара пĕтĕм тĕнчене илттермелле «сас парасшăн»: «Çĕн тĕнче! Эй çĕнĕ кунăм, Каялла ан кай, ан чак!» Халиччен çавăрнă шухăша çапла тӳрлетни чăрмантармĕ. «Çĕн сывлăш» варкăшне туйнă этем чунĕнчи сăнсем — динамикăллă,темпĕпе — васкавар, содержанийĕпе — çутă та килпетлĕ. Тĕнче мĕлюн тĕспе вăй питтиленет, пиншер çыннăн ĕмĕрхи ĕмĕтне ынатлăн çупăрлать, герой чĕрине вут-хĕмпе кăварлантарать. Тепрер чух ĕçпуçа пуçласа çырса кăтартни те тĕл пулмасть кунашкал текст-

сенче (уйрӑмах христиан тӗнӗнчи сӑнарлӑха никӗсе ярса ҫырнӑ сӑвӑсенче), пӗрремӗш йӗркеренех хастар чӗнӳ, йыхрав интонацийӗ янӑрама тытӑнать: «Эй ваттисем! иртнӗ ӗмӗрӗре Асап чӑтса иртternисем! Мӗн аваллтан чӑваш чӗлхи Асап чӑтни аса килет-и сире? Сире аса килет-и авалхи? Шухӑшлӑр-ха! Ас тӑвӑр, ваттисем!» Ку йӗркесем «Чӑн чӗрӗлнӗ» сӑвӑран. Анчах унӑн пӗрремӗш ҫаврӑмӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм хайлав хиствепе чӗнӳ, хавхалантарупа ӳкӗт таппине ытарнӑ кунта. Интонацийӗ — ҫӗкленӳллӗ, васкаварлӑ, хӗрсех, ҫивӗчленсех пыракан интонаци. «Чӑваш! Чӑваш!..» сӑввӑн тытӑмӗ те ҫавнашкал: «Сан ыйӑхлӑ уюсене, Сан лӑпкӑ кӑмӑллӑ, ачаш, Йӑваш-айван ялусене Савмашкӑн манӑн халӑм ҫук. Чӑваш тӗнчи ҫывхарнӑ чух Чӑвашӑн чунӗ йӑваш-ши? Анаслӑ ыйӑхӑн ӑшши — Выранлӑ-ши?.. Выранлӑ-ши!..» Кунта та унччехи механизм, чӗнӳ-йыхрав хайне хай хӗтӗртсе, ӳсӗмлетсе пыни. Йыхрав объекчӗ — сӑпатлантарнӑ уйсем-вӑрмансем, асап, чӑваш чӗлхи, ҫӗр-шыв... Кашни сӑнарӑн пӗтӗмлетӳллӗ ӗлки-хапи, чӑваш йӑлиллӗ тыткаларӑшӗ, чунӗпе чӗри, шухӑш-кӑмӑлӗ уҫӑмлӑ. Сӑвӑҫ чӗлхинче кашнинех чӗрӗ организм выранне картнӑ вӗсене, вӗсемпе диалога кӗрекен лирика геройӗн хевти-хӗмӗпе чунланӑ: «Сӳтӗл, татӑл, асап саламачӗ, Чура мар эпӗр тек ӗмӗрне!..»; «Чӗрӗ юлнӑ ҫӗр-шыв сасӑ пачӗ, Эп пӗлеп: ун сасси уҫах мар» («Или! Или!..»); «Чӑваш ӑсӗ — хурӑҫ пул, Пӑр кас, — ак ҫирӗп чул — Ӑспа кас та вут кӑлар! Чӑвашӑн ӑсӗ! Вут-кӑвар, хӗртсе хӗретнӗ хурҫӑ пул!» («Чӑваш! Чӑваш!!!»). Час-часах ку сӑнарсем ҫумӗнче ятылмашӑн (местоименин) килпетлӗ хапи выранлӑ: «Чӑваш! Чӑваш! **Сан** (Г. Ф.) «ыйӑхлӑ уйусене...»;«**Эсир** (Г. Ф.) асапсене парӑнманнипе Чӑваш чӗлхи чӗрӗлчӗ вилӗмрен» («Чӑн чӗрӗлнӗ»); «Тинӗс, тинӗс, **Эс** (Г. Ф.) хаяррӑн» («Тинӗсе») т. ыт. те. Фраза васкаварлӑхӗ, ҫапла, «ҫӗн сывлӑш» варкӑшӗ, чӗнӳсемпе хистев, ятылмашлӑх, ҫӗр-шывӑн тӗрлӗ сӑнӗсене, кӗтесӗсене этем чунӗ кӳни (сӑпатлантару) ҫинче кӗвелӗкленет. Кунпа пӗрлех, кун тӗллӗн килӗнтеш ытти мел-мехел те пур — фразӑсен пӗр йышши конструкцийӗсем шухӑша хӗв кӑмӑлпа хӗртсе тӑни, кӗске, умлӑн-хыҫлӑн черетленнӗ ҫаврӑнӑшсен чуппи-таппи. Ак «Тинӗсе» сӑввах: «Тинӗс, тинӗс, вӑйлӑрах Хыҫҫӑн-хыҫҫӑн хум пӑрах. Тамӑк вутлӑн, // тамӑк ҫутлӑн, // Вут-кӑварлӑн, // хӑр-хаяррӑн, // Тайӑн-тайӑн, // ҫыранварӑн, // Хутлӑ хумлӑн сулӑнуткӑн». Час-часах 20-мӗш ҫулсемшӗн кӑтартуллӑ повторсен ӗлки-чунӗ куҫа курӑнать: «**Тинӗс, тинӗс,** — умӑнта **Ҫӗн** чӑвашӑн **ҫӗн** поэчӗ; Авалхи кунсен ӗречӗ **Ун чунне** тапта-тапта, **Ун чунне,** чӗри тӗпне Хурлӑхлӑх юрри хӑварнӑ». Тӗрлӗ сӑрсене, сӑмахсене мӑшӑрӑн илсе пыни те ҫав тӗллевшӗнех ырӑ: «Кӗрешӳ **ӗҫневӑйне** Хай чӗрин хӗвелӗ тутӑр»; «Ҫӗн кунне, ҫӗн **кун-ҫулне**»; «Мӗкӗр, ахӑр, **кар-карла**», «**Хыҫҫӑн-хыҫҫӑн** хум пӑрах»...

Тепӗр йышши панорама-планетарлӑх ҫакнашкал вӗри те васкавар ритмран писнӗ. Е, тӗрӗсрех каласан, вӑл шая ҫитмен-ха. Акӑ тӗслӗх: «Катаран каҫ килсен, каҫхи кунӑн мӗлки Уйсене ыйхӑпа хупласан, Йӗркерен-йӗркерен тӗрлӗ шухӑш йӗрки Куҫӑма пустарма пуҫласан, — Ӗлекхи ӗмӗрсен ӗмӗлки-кӗлетки Куҫӑма курӑнать аякран»... Темпоритм — прозӑри евӗр васкавсӑр. Предложенире пӗчӗк инверси те пулин ҫук. Ку сӑна ӗнтӗ чӗрӗлӳ хевти тесе йышӑнаймӑн, тӗнчен темиҫе ӗмӗр хушши нӗрттеленсе пурӑннӑ екки сӑнланнӑ ку сӑвӑра. Анчах шухӑш аталанӑвӗ поэт чӗрине татакан сӑнсем патне ҫитсен кунти юхӑм та вакланать: «Ман ҫӗр-шыв хӗрлӗ юнлӑ хӗрес ҫумӗнче ҫакӑнса, // ҫыхӑнса тӑраять. Кӑмрӑкланнӑ асаплӑ чӑваш чӗринчен **Юн тумлать, // юн тумлать** — хӗрле юн»... «Выҫ псаломра» та ҫав техӗм — «кивӗ кунӑн шӑм алли» чӑваш ҫӗр-шывне «выҫлӑх ҫӑварӗнче» таткаласа какайлани. Анчах уйрӑмшар строфана, кашнине пӗрне пайӑр сӑпатлӑ тунӑ сӑвӑҫ. Ҫавӑнпа сӑнарсен аталанӑвӗ-амаланӑвӗ кунта та пӗр йышшилӗх феноменӗ ҫине тиенет: «Кивӗ кун» «Ҫӗр-шывӑма **кышлать, кышлать, кышлать.** Пӗрене **пӳртсем** — тар тертлӗ **пӳртҫуртсем** — Ыйткалакансем халран кайса пӑчланчӗҫ: Хӑрса хытса **выртаҫҫӗ,** чирлесе **выртаҫҫӗ,** вилсе **выртаҫҫӗ** выҫӑ анасем. Айванӑн Атӑл ахлатса **выртать**»... Повторсен каплалла сӑнсӑпачӗпе фунцкийӗ 20-мӗш ҫулсенче тӑтӑшах ӗҫе кӗнӗ, прозӑшӑн та кӑмӑллӑ илемлӗх мелӗ шутланнӑ. Ҫав ӗҫӗн пусӗнче ун чухнехи чӑваш литературинче Ҫеҫпӗл тӑнӑ тесен те ҫылӑх пулас ҫук. Илемлӗ хайлав, сӑмах искусстви ҫӗнӗ, халиччен пулманла, кӗтмесле вӑй-хал, синтаксис, сӑнарлӑх грамматики тупнӑ ҫапла. Сӑлтавӗ — пӗтӗм тӗнче пӗр харӑс ҫӗнелнинче, хӗрӳлӗх вучӗ ҫӗр-шыва тӗпрен ярса илнинче. Ҫӑл куҫӗ ун — ҫак ӗҫшӗн Ҫеҫпӗл пӗле тӑркачах асап вутне кӗрсе кайнинче, хатар ҫӗкленӳшӗн хайне чӗптӗм чухлӗ хӗрхенменнинче, пӗтӗм тӗнче асапне хай ӗнси ҫине тиенинче.

Ҫӗкленӳре урӑхланса улшӑнас техӗм, тӗрлӗ ӗҫ-пусӑн, сӑнсен, ҫӗр-шывсен, аваллӑхпа пулассин панорами-планетарлӑхӗ горизонталь майлӑ кӑна теме пулӗ-ши? Пулмӗ, вертикаль майлӑ инҫет, пӗтӗм ҫут тӗнче, тӳпе кӗрет поэтӑн вӗресе тӑракан кӑмӑл ытамне: «Хӗвел хӗлхемлӗ хӗлӗхсем Ҫитмӗл ҫич чӗлӗхлӗн янраҫҫӗ» («Инҫе ҫинҫе...»); «Кӑвак



**Петĕр ХУСАНКАЙ,**
**Чăваш халăх поэчĕ**

# ПИРĔН ÇЕÇПĔЛ МИШШИ

Çăлтăрсем — шултрисем, вĕттисем —
пĕр канашлăн
Ялкăшаççĕ уяр тӳпере...
Пĕлĕте яр çурса, метеор пек самантшăн
Ҫыпăнать те — сӳнет ĕмĕре.
Çăлтăрсем çуталаççĕ çаплах килĕшӳллĕн,
Анчах лешĕ — мĕн ĕмĕр тăршши
Курнă çын асĕнчен çухалмасть вара ӳлĕм.
Çавнашкал пирĕн
Çеçпĕл Мишши.

Тинĕс хумĕ чĕвен тăракан шур çилхеллĕ
Урхамах пек сикет, кăтăрать.
Харсăр кимĕç тухать, çиле хирĕç вăл меллĕ
Киммипе сĕм шыва кастарать.
Ахăрать, мĕкĕрет, хăратать тĕпсĕр авăр:
«Сахал мар пулнă сирĕн йышши!»
Анчах кимĕç ишет, кĕсменне пăрахмасăр.
Çавнашкал пирĕн
Çеçпĕл Мишши.

Ăмăрткайăк вĕçет ĕмĕрхи ту-сăрт урлă,
Тинкерсе вăл пăхать тавралла.
Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă —
Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.
Варкăшать, çӳлерен те çӳле ярăнать вăл,
Мал енче — çут хĕвелĕн ăшши.
Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.
Çавнашкал пирĕн
Çеçпĕл Мишши.

Вăл чăваш чĕлхине, юмахри Данко евĕр
Çунакан чĕрипе çутатса,
Çул кăтартнă; вăл шаннă пĕр иккĕленмесĕр
Çĕн чăваш тĕнчене тухасса.
Вăл куран Интернационалăн кĕперĕ,
Пур йăхпа та пире тан туса,
Шухăшпа виçейми тӳпене халь çĕклерĕ
Пирĕн ирĕклĕ, харсăр ăса.

Эй, эсир, çамрăксем! Ăмăрт куçлă, çунатлă,
Çеçпĕл чĕннĕ чăваш ачисем!
Эп сире чи çӳлте халь курасшăн çунатăп,
Ĕненсе, юратса пехиллем.
Вăхăт çитрĕ: чăвашăн чĕлхи тимĕр татрĕ,
Туптăр, хăйрăр ăна малалла!
Ыранхи çĕн ăста тĕнчене янраттарĕ.
Çамрăксем! Вăл — сиртен тухмалла.

çутăран шăратнă ака пуç, Туртийĕ хушшинче хĕвел ташлать» («Çĕнĕ Кун аки»); «Ман çĕр-шыв хĕресне аça çапрĕ» («Или! Или!..»). Вăл кăна-и, вăхăт вĕççĕрлĕхĕ те хăй патне илентерех тăрать сăваçа — «Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ Çĕн йĕрке килсен» («Вăхăт çитĕ»); «Мĕскĕн юлташăм, хăта, Суха пуç çынни, иртсе кайнă вăхăта Ас тăвататăн-и? («Иртнĕ самана»); «Яш кун-çулри сенкер тĕссем Ĕмĕрлĕхех сӳнсе çĕтсен» («Паня Бекшанский тусăма»); «Мĕн авалтан чăваш чĕлхи Асап чăтни...» («Чăн чĕрелнĕ») т. ыт. те. Тепрер чух калăплă сăнлăхсен анлăшĕ иртнипе хальхине (е пулассине), çĕртипе тӳперине... пĕр тĕле кӳрет: «Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет (çӳлти — Г. Ф.)... Тăлăх хирте каç пулса килет (пулас, синкерлĕ вăхăт палли — Г. Ф.), Курăксене тайса çил вĕрет, Çĕр çуммипе тусан вĕçтерет (çĕрти — Г. Ф.)» («Пурнăçпа вилĕм»); «Çĕн Кун аки пуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри (çӳлти — Г. Ф.), Касса-касса уй урлă кас тăвать (çĕрти — Г. Ф.), Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри (иртнĕ вăхăт палли — Г. Ф.) Вилсе выртса пытарăнса юлать». «...Хура çĕр айĕнчен, Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн сарăлса, хăюллăн Чăваш çынни кун-çулĕ тухĕ (пуласси — Г. Ф.), «Хăватлă, **çĕн** чĕреллĕ **çĕн** ĕмĕр чăвашĕ Хул пуççипе кăвак пĕлĕте» перĕнĕ (пуласси, тӳпепе çĕре пĕр тĕвве çыхни — Г. Ф.). Çут тĕнче, çапла майпа, тĕлĕнмелле пĕрлĕхлĕн пĕтĕçет сăнара; вăхăтпа талккăш пĕр-пĕринчен уйрăлми тĕртĕмленеççĕ. Лирика геройĕн чун пурнăçĕ халăх, наци культурин шăпине пĕр кăкран шăтса тухса амаланать, парка хунав чуптарать.

Чăнах та, ку яхăнччен мĕн калани-туни «вут кайăклăн» вĕçме хĕв тупнă чăвашăн чĕринчи хастар-хатарпа пĕр кĕвелĕклĕ. Гиперболăпа литота çураçăвĕпе пĕрлешĕвĕ чăмăртанать Çеçпĕл хайлавĕсенче. «Пурăçпа вилĕмри» сăнсемех — мĕн ĕмĕртен хăйсен йӳтĕмĕ-еккипе чупакан пĕлĕтсем (вĕсен пурнăç килпет-

не этем ăнкараяс çук), авалхиллех куръăксене тайса вĕрекен çил, тусан çĕр çуммăн йăшăркаланни — ку йăлтах ĕмĕрхи, çĕр çулсен тарăнăшĕнчен килни. Килессе те... халăх хăйĕн пӳкле пĕтнĕ ывăлĕсене хĕрхенсе юрланă юрăсен-балладăсен ахрăмĕ пек çитнĕ-тĕр вăл пирĕн куна. Ĕмĕрхи çак сывлăша хирĕç тăраканни, литота калăпне вырнаçас пăнчă, «вĕççĕр-хĕрсĕр» тĕнчен пĕр лаптăкĕ «Хирте пĕр тĕмеске пĕр-пĕччен... Тăпри çине пуснă вĕлтĕрен». Акă вăл поэтăн илемлĕ тĕнчинчи икĕ ен: чараксăр-чиксĕр анлăлăх, çут тĕнче, ĕмĕрсен таппи (вĕсем каяссипе килесси) тата конкретлă, пайăр сăпатлă, пĕчĕк кăна пĕр пулăм. Ку икĕ ене палăртнипех çырлахмасть чăваш сăвăçи. Этем, халăх, наци,çĕр-шыв кун-çулĕн аталану майĕ-мехелне, ун философи тĕшшине тупмалли çул кăна вăл çак хирĕç тăру. Тарăн та пысăк пĕтĕмлетӳсем тума ал майлă çак поэтика, уйрăм факта, пайăр çын ĕмĕт-сунăмне пин çуллăхсен аталану йĕрĕпе çыхма вырнаçуллă... Тусне, Бекшанские халалласа сăвă çырать поэт, унта хăйĕн малаш кунĕсем (яшлăхăн çулланнă тапхăр валли юлнă авăкĕсем) тĕссĕр, айванла пулассинчен шикленнине пĕлтерет: «Пуянах марччĕ вăл чунпа», — тесе те калăн...» Юлташла çыру (вырăсла: дружеское послание) жанрĕ кăна темелле çак сăвва, темрен тем кĕтме те йывăр пек сăвăçран. Куллен кунăн пĕр ăстрăмĕ кăна ӳкерĕннĕ, унран ытла нимĕн те çук теме май килес пек. Çапах та, юлташла çыру жанрне Çеçпĕл эпикăллă шухăшсем çавăрма ĕçе кӳлнĕ, ахаль кăна тенешкел жанр ăшчикне çĕнĕ, философилле сывлăш вĕрсе кĕртнĕ. Геройăн тĕнче туйăмĕ трагедиллĕ кунта: хăй пурнăçĕ ытла та «васкавлă», кĕтмен çĕртен иртсе каясса тĕшмĕртсех тăрать тейĕн. Фраза таткаланать, ăна сăвăç нумай пăнчăпа палăртать: «...тесе те калăн... Айăпа Илеймĕп хам çие. Пĕлетĕн... Эх... пурнăç хытă çапрĕ-çке». «Санра ман **чунăм** татăлса Юлать... ыратакан ман **чунçăм...**» Трагедиллĕрех кăмăл хуçлăмĕ, чун уççиллĕ ырату сăн ӳкерчĕк хыçĕнче çырса панин тăпсинчен тухать. «Чун пурлăхне салатакан» тиев пирки сăмах тытакан этем вăхăтăн тертлĕшарлă хевти пирки шута ӳкет. «Ылтăн инçетри» яшлăх хыçа юлни ăна хăй умĕнчи, тусĕ умĕнчи яваплăх çинчен шухăшласа пуçа ватма хушать. Тусĕ асра упрас «тĕссĕр пит» героя хытах пăшăрхантарать, ăна вăл «тĕтреллĕн» кăна ас туса юласран хăрать. Паллах, ку туйăмсене пĕлтерме юлташла çыру е ӳкерчĕк хыçне çырни кăна юрăхлă тесе ĕнентереймĕн. Иккĕшĕ те пĕр пысăк, калăплă шухăша çавăрса каламалли нумай-нумай (пулма пултарас) мелсенчен пĕри кăна. Поэт пач урăх эпизодсем илсен те çав кăмăлах пĕлтерме пултарнă... Ку вара нумай пăнчăн философиллĕ еккине палăртать... Çеçпĕл таткаланчăк кăмăл евĕкне пĕр-пĕринпе сыпса пырать, хуçăлнă чун тĕпренчĕкĕсене пĕрин çумне теприне тĕкнĕн пĕрлештерет. Тата тепĕр тĕслĕх: «Пурнăçпа вилĕмри» фразăсен сыпăну, вĕсем мантажлă çыхăннин йĕрки-шывĕ. Сăвă вĕçĕ çапла: «Санăн аллу çурла тытас çук... Çĕр иртет те... килет çутă ир... Анчах ĕмĕр пĕччен тăлăх хир. Вĕлтĕрене тайса çил вĕрет, Вилнисене асăнса йĕрет...» Кунта та логика тĕлĕшпе çыхăнсах пĕтмен мотивсем пĕрлешни ум кайнă. Юлташла çыру жанрĕ пекех, элегиллĕ юрă та (баллада-и, тен?) тахçанах хывăннă жанр, сăмахлă культура факчĕ. Çеçпĕл вĕсене халиччен пулманла лару-тăрăва вырнаçтарать, функцийĕпе çĕнетет. Хайхи, культура тексчĕ ĕçе кĕрет, шухăша ăсталамалли мел пек ĕçлеме тытăнать. Акă хирти тĕмеске айне выртнă çын — «çурла тытасси» кăна мар, ытти тĕллевĕмĕт те кирлĕччĕ-тĕр-ха ăна, паттăра: ывăл-хĕр ӳстересси, сăвă çырасси, тăван-пĕтенпе кĕрекере ларса савăнасси... Сăвă çырасси тени ăнсăрт çине кĕмсĕрт витни мар, хăех каланăччĕ поэт: «Çĕн поэт ака та тутăр, утă çултăр, вутă çуртăр...» Хăй те вăл, сăвăç, мĕн ĕмĕрнех чăваш чĕлхи пирки калаçнă, чăваш сăвăçисем вичкĕн чĕлхепе «тимĕр татасса» шаннă, вĕсем «сас парасса» кĕтнĕ. Тен, шăпах çавăнпа юлташла çырупа элегиллĕ юрă жанрĕсене çĕнĕ контекстра ĕçлеттерет те вăл. Нумай пăнчи те кунта — пулма пултарнă пурнăçăн сиктерсе хăварнă, асăнмасăр иртнĕ нумай енлĕхĕ çине шак хуни вăл. Бекшанские кăмăлланă персонаж та, вилнисене асăнса йĕрекен çил те пурнăçăн малашлăхнех саваççĕ пулĕ: пуç хунă паттăрсене ĕмĕр асра тытни, тантăшсем хушшинчи ырă тивĕç ялан хисепре пулни — пурте Çеçпĕл сăвви-хайлавне культура контексчĕн сĕмĕ кӳрет. «Тинĕсе» сăввăн çавнашкал сывлăшне туймасăр иртсе кайма пулĕ-ши вара? А. С. Пушкинăн «Прощай, свободная стихия» опусĕн техĕмĕ сисĕнсех сисĕнет мана. «Чипер юлсам, хĕвел çĕр-шывĕ» раснах М. Ю. Лермонтова («Прощай, немытая Россия»), «Эп вилсен» Т. Н. Шевченкăна аса илтерни пирки те иккĕленме çук. «Чăн чĕрĕлнĕ», «Катаран каç килсен», «Или! Или! Лима савахвани!..», «Выç псалом», «Инçе çинçе уйра уяр»... сăвăсенче христиан тĕнĕн ĕмĕрхи символĕсем, библи сăнарĕсем эстетикăлла тĕшше ларнине те курсах тăратпăр. «Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути», «Чăн чĕрĕлнĕ», «Çĕн Кун аки», «Инçе çинçе уйра уяр», ытти çавнашкал сăвăсенче чăваш мифĕсенчи, юмахĕ-халапĕсенчи, вĕрӳ-суру тĕнĕнчи сăнарлăх мелĕсем чĕрĕлсе тăнă. Тарăна кĕрсе

пăхас-тăк, Çеçпĕл хăй геройне, е тĕрĕсрех каласан: сăвăçăн лирика гейроĕ хăйне ним вырăнне картмасть тейĕн. Хăйĕн сунăмĕ-юнăмĕ тӳрре килес мар пулсан, ним юлми пĕтме, çĕр питĕнчен çухалма, пулас ăрусен асĕнчен тарма, ылхан туянма хатĕр вăл. Çавăнпа та чăваш йăлипе, хаяр сунса пĕтме кĕлĕ хывни мал турткă тупать ку сăвăсенче (кун çинчен каярах калăп). Ăнланмалла та-тăр çав — романтиксем ĕмĕрнех максималист пулнă, кашни туйăма тĕппи-пĕтти таран амалантармалла романтикăн. «Кĕпер хывăр», «Хĕрлĕ-хĕрлĕ мăкăньсем», «Ĕнер йăвăç пахчи кăмăлне», «Шухăшласа кăларнă куççене» евĕр хайлавсем поэт вырăссен «кĕмĕл ĕмĕрĕнче» палăрнă поэтикăна иленнипе кăтартуллă. Çав поэтика ун чух А. Белый, В. Брюсов, А. Блок, М. Голодный, К. Бальмонт тата ыттисен сăввиюрринче тĕвĕленсе чăмăртаннă. Чылайăшĕ вĕсенчен Ф. Ницше философийĕпе кăсăкланнă, теппер чух пурнăç тĕшшине кăлăхра курма капашнă. Символсем те вырăс сăвăçисене час-час Вилĕм, Вĕççĕрлĕх, Пуласлăх, Иртни, Юрату, Пурнăç, Кун-çул категорийĕсем тавралла çаврăннă. Самана ăнтăлăвĕ-таппи уйрăм çынна вута чикет, хăйне хĕрхенми пулма хушать. Вăй-хал çукки, чирчĕр аптратни, нишлĕлĕх, «нăшкани» ун чух тĕпри идейăсем шутланнă. «Çĕн çĕре чĕнен чĕре» çав самана кукăр-макăрĕпе аманнă та. Символистсемпе çывăхланни Çеçпĕле те уйрăм çыннăн чун ыратуне обществăн аталану еккипе пĕрлĕхлетме хушнă. Самана хуçнă-сусăрлатнă çын вара, хайхискер, малаш çула утма «кĕпер хывнă» чухнехи материал пулса юлнă («Кĕпер хывăр»). Пурте ку Çеçпĕл чăнласах сăнарлă сăмах культуринче культурăпа, культурушăн ĕçленине систерет. Çапах та кунашкал енсем сăнамасăрах, тарăна кĕрсе тишкермесĕрех уçăмлă-ха. Тарăнни, никĕсри вара — урăххи.

Апла пулин те, çиелтенех палăруллă тепĕр ен пирки ятне асăнса хăварни кирлĕ: Чĕлхе... Поэзи... Вĕсене асăнмасăр, асра тытмасăр сăвăç пĕр лирика тĕрленчĕкĕ ăсталамасть темелле. Сăнарĕсем иккĕшĕ те туратланнăçем туратланаççĕ, тарăнланаççĕ. Бекшанский кăмăлне халаллă йĕркесенчех художник хăй таланчĕ халăх, наци шăпихурипе çыхăнасса тавçăрать, «Чун пурнăçĕ» нацин пулас культуришĕн тĕл килменрен хурланать. «Пурнăçпа вилĕмĕн» харкамĕ (персонажĕ) те акана тухсан шăрантарса юрă юрлаймĕ — çав та чуна хуçать. «Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине» евĕр произведенисем пирки вара ним каламалли те çук — чĕлхе, поэзи кунта халăхăн историйĕпе, аваллăхри çулĕ-йĕрĕпе, малашлăх ĕмĕчĕпе пĕр хавалла, çутă сăваплă. «Кăмăллă çĕр-шывăн кăмăллă чĕлхи» ĕмĕрхи асап витĕр тухса та вăйне çухатман, кăвартан та таса упраннă. Апла-тăк, Çеçпĕл хăй çĕре кĕрсен те аптрамасса пĕлет — «чăваш чĕрĕлнине курнăскерĕ», «вилнĕскерĕ канлĕ-канлĕ выртĕ, Канлĕ, çăмăл пулĕ çийĕнчи тăпри» («Чăваш чĕлхи»). Хăй вилĕмĕ те вилĕм мар геройшăн — «Ĕмĕте усратăп: Эс килĕн. Килĕн тĕнчене!» — шанăçлăн пĕлтерет вăл чăвашăн пулас сăвăçне хăй шухăшне. «Йывăр шухăшсенче» этем кăмăлĕ ӳкĕнĕçе те çаврăнать пек — «Е чăваш çынни, чăваш ялĕ Сарлака çĕр çинчен çухалĕ?» Апла пулсан, тесшĕн çав çын (хăйне чăваш ылханĕнчи сăрсемпе усал сунса) «Вилтăпри вĕлтĕрен тăхăнтăр, Пуçăм çинче çĕлен шăхăртăр». Çук, чуна йăлтах татса, кăмăла трагедипе амантса хуçăлса ӳкни мар вăл. Сăвăра сыпăнсах пĕтеймен фразăсемпе тăтăш усă курнă. «Акă куçăм умĕнчи чăваш çĕрĕ...» — пĕтĕм çĕр-шыв тухать куç умне, нумай енлĕ, нумай сăпатлă чăваш çĕрĕ. Çапах, ыратупа сывлăшĕ пӳлĕнет лирика харкамĕн, пур ен çинчен те татса калаймасть. Сăмахĕ — пурĕ пĕрех — чун уççиллĕ, ыратуллă, ĕненмелле: «Тăван çĕр-шыв, сана ĕненеттĕм, Пулас мухтавлăхна сисеттĕм... Халиччен шанчăкпа чĕре çунчĕ...» Шухăш йĕркипе ку таткалану ярурах та кайнă пек те, кĕç арканать çав ярулăх, йăлмакланать: «Кĕнеке те пулĕ çĕр-шыв мулĕ...» Çапла тăтăшах чăлханас енне кайнă ритм йăл илет — «Хуйхăллă чĕрере вăйăм чакрĕ...», «Апла пулсан...» т. ыт. те. Ку ĕнтĕ ĕç-пуç урăхла та пулма пултарас ĕненӳ çулне уçă хăварни. Унсăрăн нумай пăнчă лартмĕччĕ те ӳнерçĕ (художник). Паллах, ак халех, çак самантрах курас килет Çеçпĕлĕн чăваш чĕлхипе поэзийĕ «аслатиллĕ сассапа» чĕрĕлнине, ватти-вĕттине савăнтарнине. Анчах хальхи вăхăчĕ лӳппер поэт тĕнчинче, васкавсăр вăл. Геройĕ вара шавах пулас вăхăта кĕтет: «пулассине — хĕвел пекех çап-çутă», тăтăшах пулас вăхăтри глаголсене ярать: «вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ»; «чăваш чĕлхи тимĕр татĕ» (ку шухăша хăй вăхăтĕнче В. Родионовах каланăччĕ), хушу наклоненине савать: «сассуна пар»; «мана пытарăр», «хастарлă, хыт утăмлă пулăр» т. ыт. те. Эппин, чи ыратуллă самант та, чи трагедиллĕ тапхăр та тăван культурăн пуласлăхĕпех, ун малаш çулĕ питĕрĕнес çуккипех çыхăннă Çеçпĕлĕн. Çавăнпа вăл чăваш чĕлхи Христос евĕр «чăн чĕрĕлнине» сăнарласа парать, вăл «хĕвел кăварĕпе вутланасса» пĕлет. Чĕлхе ăнлав та поэт пултарулăхĕнче наци, халăх культури пĕлтерĕшлĕ, ун историйĕпе, аваллăхĕпе, пуласлăхĕпе пĕрлĕхлĕ.

Çапах та, «çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ» хывнă новаторла çул самай инçерехе кайнă. Çĕнетӳн тымарĕсем те, ун тĕллевĕсем те

**Георгий ЕФИМОВ,**
**Чăваш халăх поэчĕ**



# ÇЕÇПĔЛ МИШШИ ПАЛĂКĔ УМĔНЧЕ

Ĕçе каятăп-и,
Килетĕп-и ĕçрен —
Ун умĕпе утатăп эп
Куллен.

Çеçпĕл Мишши
Вĕçмешкĕн хатĕрленнĕн
Тӳпенелле
Куçĕпеле тĕлленĕ.

Чечек хуратăп эпĕ
Ун умне,
Вăл чăваш халăхĕн хисепĕ,
Вăл хывнă туслăх кĕперне.
Вăл —
Çĕнĕлле Чăваш
поэзи ашшĕ,
Пире ялан ĕçре,
Тĕрĕслĕхре
Курасшăн.

Эпир хастарлă,
Хытă утăмпа
Утни çинчен пĕлесшĕн,
Чăваш поэзийĕн
Сар кайăкне итлесшĕн.

Чăваш ачи те
Килчĕ тĕнчене,
Вăл парăнтарчĕ
Тĕпсĕр тӳпене.

Чăваш чĕлхи те
Татрĕ тимĕре,
Вăл тĕрелет
Çĕнелнĕ ĕмĕре.

Анчах та хăшпĕр чух
Куратăп эп:
Пĕр намăс-симĕс çук,
Кăнттам çеç чĕлхепе,
Сан умăнта сăмах çапаççĕ,
Вăтанмаççĕ.
Хăйсем вăй-халсăр-ха,
Çавах та халăха
Чĕнем пекки тăваççĕ,
Сан пек кăвар чĕреллĕ,
Хĕрӳ чĕлхеллĕ
Евĕрлĕ туяççĕ.
Санран, пиччеçĕм Çеçпĕл,
Именесчĕ,
Пиртĕн кашни-пĕри,
Ай, виçене пĕлесчĕ...
Ăçта унта?! Мăка чĕлхепеле
Пĕри вĕçкĕнленсе
Чарусăррăн пуплет.
Сан сăввусен хĕрӳлĕхне
Пĕлмест вăл,
Сан асапна та
Нимĕн те сисмет вăл.
Пире эс, Палăк,
Куншăн каçарсам,

— таранрахра. Акă нумай пăнчăлăхăн илемлĕ хăйне евĕрлĕхнех илес — мĕнле ăна халиччен пулман синтаксис палли тес мар?! Чăваш çĕр-шывĕн çĕнелӳ шăпи трагедиллĕ, ыратуллă пулнине ăнкарнă поэт-романтик татăк-кĕсĕк пек, фрагментлă стиль патне çитсе тăнă. Çитменнине, хăй шăпи кĕске сывлăшлă пуласса та систерсе тăрать-и, тен, шалти темле туйăм! Лирика геройĕн арки çине те кăвар сапăннă — нихçан сывалми пин суран ун чĕринче. Хавасланса-хастарланса кайнă тапхăр сасартăк «йывăр шухăшсемпе», ĕненӳ çĕтес патне пырса тухнипе ылмашать. Ыранхи кун расна сăвап тупасса кĕтни паянхи тĕссĕрлĕхпе пӳлĕнет... Ку ĕнтĕ, каламасăрах паллă, — шухăша таткаланчăклă йĕрпе ярассин сăлтавĕпе çăл куçĕ. Пĕтĕм чăваш ятĕнчен калаçать Çеçпĕл, ун нуши-хурине хăй ăшне илет, ун пуласлăхĕшĕн пăшăрханать. Чĕлхи-пуплевĕ те унăн — мĕльюн çын илтмелле шухăш-кăмăла аталантарни, хăй ĕмĕтне унпа пĕрле пурнăçа кĕртме пултарасса шанни. Сăвăç-трибунăн публицистика пултарулăхĕ, романтикăллă çĕкленĕвĕ чăвашлăха малалла тăсма, «сăмах хăватне ĕненме» (П. Хусанкай) çĕн поэта кĕтет. Килĕ-ши вăл? Килмĕ-ши? Пит асаплă, тертлĕ ăна кĕтсе илесси! «Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вуткăварĕ», — калать герой татăклăн, килмĕ теекенĕ — «улталанĕ», «Кам «çук» тет, çав — суеç чĕлхеллĕ; Кам «мар», тет, çав — суккăр чапрас». «Çĕршывăм хĕвеллĕн çуталĕ, Тапранĕ кăвар кайăкла» («Хурçă шанчăк»). Ку хастарлăха «шăршлă каç йывăрри» сиктерсе антарасшăн ĕненӳ тăпсинчен. Малаш хевтешĕн хатарланас чухне чăваш поэчĕ вилсе выртать сасартăк — Иван Ахах, ун ĕмĕрĕ «Чуна пăчăртаса аса килет» («Чăваш поэтне, Ахаха асăнса») Е «Чун савнă чăваш чĕлхийĕ Пĕтмелле пулсан»? («Эпĕ вилсен...»). Нивушлĕ шанăç «кăварлăн чечекленеймĕ»?.. «Ыран килес Çĕн Кун юрри-кĕвви Ман чĕрене çапла килсе тивет», — хыпарлать ĕненӳпе шанăçсăрлăх хушшинчи сăвăç. Нумай пăнчи те унăн — çав хушă çине шак хурать, интер-талккăш çине. Туйăм-кăмăла пĕр тикĕс, пĕр таткаланчăксăр йĕрпе сыпăнтарса яма пит йывăр. Ав мĕншĕн тĕрлĕ шухăш пайрăмĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнсах пĕтмен пек. Монтажлă синтак-

Ан тăк пире
Çиллессĕн хăтăрса.

Эс, Çеçпĕл, — тăвăл, хурăç,
Çĕнĕ кун!
Куçран куççулĕ мар,
Тумлать чĕр юн,
Çав юн çинче çĕнĕ тымар
Ярать хăватлă Чун.
Çавă Чуна чăваш чĕрипеле
Кашнин ăнланмалла.
Мĕншĕн тесен чăваш çĕрĕпеле
Ĕмĕрлĕхе çыхăнмалла.
Чăваш çĕршывĕшĕн
Сăвăç пекех çунас пулать.

Эй, Çеçпĕл, Шупашкаршăн антăхса
Эс çуннă Украина çĕрĕнче.
Нуся сăнне ялан умра курса
Тек ĕмĕтленнĕ Юрату çинчен.

Мĕн тăвăн? Пурăнăç хаяр, кăра:
Е вăл лăпкать, е тăвăллăн урать.
Хурăç этем те тÿсеймест хăш чух,
Кăвар чĕрен те кунĕ-çулĕ çук.

...Пурнать поэтăмăр —
Хĕрÿ, таса сăввисенче,
Сăмахĕ ун тĕнчемĕр умĕнче.

Халь, Çеçпĕл,
Шупашкарăн варринче
Ларатăн чĕррĕн...
Халăх хушшинче
Эс пурнăн ĕмĕр,
Эс — унăн хĕмĕ

Ик пинĕмĕш çулсен сăваплă сĕмĕ...
Санпа çĕнĕ кунсем тек уçăпăр,
Чăтлăх çĕртен
Хĕвеллĕхе çеç тухăпăр.

1989—99 çç.

# ÇЕÇПĔЛ МИШШИ ÇЫХĂНТАРАТЬ ПИРЕ...

Çеçпĕл Мишши çыхăнтарать пире
Ĕмĕчĕпе, таса хăвачĕпе.
Каç сĕмлĕхне сирсе
Килес ире
Вăл кăтартса тăрать сăввисемпе.

Чĕри ун уçă пирĕншĕн ялан,
Пытарăнчăк пачах çукпа пĕрех,
Вăл Нуççăна хĕрÿллĕн чуптусан,
Упраннă çав хĕрÿлĕх ĕмĕре.

Кăвар чĕреллĕ тетпĕр Çеçпĕле,
Кăварĕ ÿкнĕ шурă хут çине.
Ыттисене вăл пĕр хăй çеç пĕлет:
Вăрттăнлăхне йăлт илнĕ хăйпеле
Тăванлă Украина çĕр айне.

Çавах вăй-халĕ юлнă çĕр çине,
Çÿрет çав вăй чăвашăн çĕрĕнче.
Вăл панă хăй чунне
Халăхсене,
Вăл — килес кунлă çĕн ăрусенче.

Сăвăçпала пуплетĕп ачаран,
Мана паян та вĕрентсе тăрать.
Çуралнăçем çĕн сăвăç чăвашра
Чун алăкне уçса алне парать.

Чăваш чĕлхи ячĕпеле пĕрле
Пулмашкăн йыхăрать вăл яланах.
Кам сăвăç сăмахне чуна илет,
Хăюллăнах
Çын кĕрĕ ырана.

Çеçпĕл Мишши çыхăнтарать пире:
Унпа кĕретпĕр çĕнĕ ĕмĕре
Хăй вирлĕн кĕнĕ пек Çирĕммĕшне,
Вут кайăклăн сарса çунатсене.
Утать поэт тăван халăхĕпе,
Кил-çурстене тăрласшăн хĕвелпе.

9.X.99.

сис хывăнать çапла, тĕрлĕ пайрăм, тĕрлĕ сыпăк хушшинче каласа çитерменлĕх упранса юлать, пурнăçăн нумай сăпатлăхĕ, пулма пултараслăхăн уйрăмлăхĕсем хыçа юлни сисĕне пуçлать. Анчах вулакан туйсах тăрать çакна, кĕскен каланă шухăш эпика çулĕ çине ÿкет, панорамăллăн аталанма тытăнать. Ахаха халаллă сăвăри йĕркесем ак: «Тĕнче симĕсленет... Хĕвел йăлтăр... Уяр. Анчах сана пĕрех: сана — вилнĕскерне — çуркуннехи тĕнчен илемĕ кирлĕ мар...» Хĕвел тĕнчене шăрçаласа ăшăтни, çĕре вăратни — ĕмĕрхи, эпикăллă техĕм. Кун-çулăн, çут тĕнчен ÿпĕнми йăли-йĕрки. «Пурнăçпа вилĕмри» сăнпа ытла та çураçуллă çак ÿкерчĕк: Пурнăçăн поэтсăр аталанас килтти те çаплах: «вилнĕ çын тăпри» çине курăк пусĕ. «Çĕр иртет те... килет çутă ир...» Çил «вилнисене асăнса йĕрет...» Чун ыратăвĕ, уйрăм çын кăмăлĕ, чĕре хĕсни çут тĕнчен нихçан татăлми, нихçан тайăлми еккипе пĕрлешет çапла. Кунашкал эпикăлăха йĕркерен йĕрке, йĕртен йĕр çыхса пыма май та çук пулĕ.

Тата тепĕр тĕслĕх, «Выç псалом» сăвă. Малтанах каланăччĕ — тĕрлĕ строфа, анчах кашни — пайăр хевтеллĕ, хăйне тивĕç сăнарлă. Пĕрремĕш çаврăмри сăмах-юмах «кив кунăн шăм алли» «çĕр-шыва» пăталаса «кышланă» тискер сăна ÿкерет. Иккĕмĕшĕнче «пĕчĕк пÿртсен тертлĕ шăпи сăнарланать — «халран кайса пăчланаççĕ» вĕсем, «халран кайса». Виççĕмĕш строфа тĕшши — «Атăл ахлатса выртнишĕн» пăшăрханса çунни... Çапла — тăтăшах. Строфасене пĕр тĕвве çыхакан, тĕрлĕ ÿкерчĕксене пĕрлехи функциллĕ тăвакан поэтика мелĕ — глаголсем повтор мехелĕпе темиçе хут каланни. Хăйне евĕр ритм хăйланать, хайхи, монтажлă сыпăксен йĕрки пуçтаруллă хайлавра пуçтарăнса çыхăнать. Апла пулин те кашни сăн, кашни ÿкерчĕк пайăр сăпатлă пулни упрансах юлать. Прозăра кунашкал ĕç хапи И. Тăхти хайлавĕсенче палăрать, вăл та Çеçпĕл пекех пысăк новатор пулнă. Каярах çак мехеле Хв. Уяр, Ю. Скворцов, Н. Мартынов, В. Игнатьев. П. Яккусен кăмăлла пуçлани сисĕнет. Эппин Тăхти прозăра, Çеçпĕл поэзире мал ĕмĕтленĕ синтаксис ум перспектива тупать. Ю. Скворцов — прозаик, çапах та нумай пăнчă феноменĕ ун Çеçпĕлтенех

тымарланать, ун поэзийĕн сĕтекĕпе паркаланать. Парадокс, паллах, анчах таткаланчăк ритмăн (поэзире кун пĕлтерĕшĕ тата пысăкрах) тĕнчене эпикăллăн, панорамăллăн, философипе, кунçул онтологийĕпе витерсе кăтартас пĕлтерĕшĕ пысăк-мĕн. Çеçпĕл поэзийĕ çак енпе прозăри хавалпа пĕрешкел. «Кĕпер хывăр» сăвă пуçламăшĕ чăнах та прозăна аса кӳрет: ят предложенисем описаниллĕн черетленеççĕ, пĕр вырăнта тăма тивĕç ӳкерчĕк калăпласçĕ: «Çулсем... Çулсем çинче вилесем, Укăлчасем панче вил шăмсем, Ах йывăр, йывăр, пăчă...» Кунран курмалăхне, Çеçпĕл сăвви-хайлавĕ проза поэтикине иленнĕ темелле. Чун тăрăмне палăртасси мар (поэзире вăл кирлĕрех, вăл палăртуллă искусство; вырăсла: выразительное искусство), пĕр-пĕр картина ӳкерчĕклесси ырăрах кунта сăвăçшăн (прозăшăн кăтартулăх — изобразительность — пахарах). Чăнласах та çапла — монтажлăх, нумай пăнчăлăх, текст интер-хутшăнусем çине таянни, кашни сыпăка пĕрне пайăр сăпатлăн упрама пĕлни, панорамăллă ӳкерчĕксем — пурте ку — прозăри евĕр эпикăна аса илтерет. Сăнарлă грамматики те Çеçпĕлĕн проза грамматикине поэзи хавалĕ тунипе паха, ытарми. Сăвăсенче глаголсен тӳпи пысăк пулни те çаван кăтартăшĕ, лирикăллă хайлавсенче повествованиллĕ (калуллă) техĕм йăл илсе каять. Глаголсен тĕрлĕ формисем текста самаях ӳсĕмлетеççĕ, чĕрĕ хăвăртлăхпа илемлетеççĕ. Анчах прозăри вăрăм описанисем поэзире вырнаçусăрне пĕлет художник, çийĕнчех ӳсĕмлĕ динамика механизмне хускатса ярать, планетарлă чĕнӳ кĕртет текста:

Эй!

Эсир,

Чĕррисем! —

Хайхи, тексчĕ те сюжетлă пек аталана пуçлать, хушу наклоненийĕнчи глаголсене ретрен рете сыпăнтарать, вĕсен ритмне хиствлĕ-ыратуллă «Ах!» междометипе палăртса, чикĕлесе пырать.

«Ах!

Кĕпер чĕнтĕрлĕр,

Ах!

Таптăр,

Ĕнсене хуçăр.

Ах,

Перĕр, перĕр!

Ах,

Нăшкатăп,

Ах,

Ĕнсене хуçăр...»

Рефренлă тĕл пулса пыракан «Ах!» междомети пайăр хевтеллĕ тĕрлĕрен сыпăксен интонациллĕ ритмне хăрталать, герой чунĕнчи юлашки хĕм-сулăма çиеле кăларать. Повтор пулнă май, период вĕçне ӳксе, эпифора функцийĕ тупса, глаголсем монтажлăха сисĕнми тăваççĕ: «Вилесем урлă, шăм куписем çинче Хĕвеллĕ ыран енне Кĕпер **чĕнтĕрлĕр.** Ах! Кĕпер **чĕнтĕрлĕр;** «Эпĕ Халран кайса ӳксессĕн, Ман урлă **таптаса** каçса кайăр, Тимĕр урасемпе чĕрем çине Хăюллăн **таптăр.** Ах! **Таптăр»** т. ыт. те. Юлашки чĕптĕм вăйĕпеле те пулин малаш утăмлисемшĕн усăллă пуласшăн — «нăшкакан» герой. Вĕсене, нимĕне те уямасăр тенешкел, тăн-тăн пусса утма хавхалантарасшăн. Пурнăçăн вĕçĕ çук, ку мехел тупăнмасан тепри тупăнĕ, Çут тĕнче каялла чакмĕ. Çавăнпа çапла татăлса кăшкăрнинче поэтăн шанăçĕ çĕтсе çĕрнине курас теместĕп эпĕ. «Çук, çук» теес пулсан, чĕнсе йыхăрмĕччĕ Çеçпĕл. Каллех парадокс: халь çеç вăйсăрччĕ герой, вăйлă та иккен, çут тĕнчере кам чĕрри пур, çавна илтмелле кăшкăрать... Акă, вилчĕ тейĕпĕр-и сăвăç?! Пурĕ пĕрех нумай пăнчă лартĕ вăл текст (хăй пурнăçĕ) вĕçне. Лартрĕ те: «Эп вилсен — мана пытарăр



*Çеçпĕл Мишшипе П. И. Бекшанский*

Çӳллӗ ту тӑрне». «Эпӗ **выртӑп... выртӑп...** Юлӗ Вӑхӑт каялла: Чӑваш чӗлхи пурнӑç майӗ Кайӗ малалла: Вӑхӑт çитӗ — Чӑваш çӗрӗн Кӑмӑллӑ чӗлхи Чаплӑ пулӗ, — вӑлах пулӗ Çамрӑк чун пахи»... Ун пек пулас мар-тӑк айӑплӑ пулӗччӗ-ши Çеçпӗл? Çук, паллах. Каллех парадокс: айӑплӑ пулӑттӑм, тесшӗн ӳнерçӗ. Мӗне кирлӗ эппин чӗлхене, пулас Сӑмаха шанса çунни, хатарлӑ хастарлӑх шырани?! Çавӑнпа кун пек енне çаврӑнас ӗç мехелне те, хӑйне те чӑн чӑвашла ылханӗччӗ вӑл: «курӑк та ан шӑттӑр Ман тӑпра çине: Çӗр çурӑлтӑр та çӗр çӑттӑр Виле шӑммӑмсене». «Йывӑр шухӑшсенче» те çав кӑмӑл ума ӳкнӗ: «Чӗрем хыпса çунса, сив кӗл пултӑр», «кӗл хаяр çилпе вӗçсе пӗттӗр», «Вил тӑпри вӗлтӗрен тӑхӑнтӑр»... Хӑрушӑ халал! Анчах шанӑçпах çыхӑннӑ вӑл, хӑй шӑммисем çинче «кӗпер хывма» хавхалантарнипех пӗрлӗхлӗ. Ыратуллӑ чӗре асапӗ çапла-тӑр ӗнтӗ вӑл, вута кӗрсе вутра çунмалла ун. Чӑваш чӗлхишӗн (культуришӗн) çуннӑ этемшӗн урӑхла шӑпа пуласса кӗтни — кӑлӑх ӗç. Ахальтен мар пурнӑçӗ те Çеçпӗлӗн чӑнласах культура тексчӗ пулса хывӑнать, шӑпи символла хевте тупса ӳтленет. Тексчӗ — философ-публицист çуннипасапланни, чӑваш культурин çӗнӗ грамматикине тупни. Лирика геройӗ шӑп çав тӗллеврен нар сыпнӑ. Ытла та хӑвӑрт аманакан, анчах пысӑк Чӗреллӗ, трагеди ытамне лекнӗ кун-çуллӑ çын вӑл, çак сӑвӑç. Амансан та хӑй пӗрре çирӗплетсе каланӑ сӑмах çинех тӑрать: «Кӑвар чӗрем — пин çын чӗри. Эп пӗр çын мар — эп хам пин-пин». Куна ӑша илнӗскерӗ Сӑмахӑн сӑнарлӑ çыхӑнӑвӗсене (валентноçне) тӗпрен çӗнетмеллине, чӑваш поэзийӗн çӗнӗ синтаксисне çапла та хайламаллине тавçӑрать вӑл. Сӑмахсем пӗрпӗринпе логика енчен мар, илемпе сӑнарлӑх енчен, парадокслӑн çыхӑнма кирлине асра тытать: «çинçе уй» (уй-хир çинçе // хулӑм пуласси иккӗлентермелле пек); «вутлӑ юн» (вӗри юн тени кулленхи чӗлхепе çураçуллӑрах пекчӗ); «кӑвар чӗре» (чӗре çунать, чӗре кӑварланса тухать тени чӑвашӑн пач урӑха пӗлтернӗ); «чӗлхӳ кӑварланса çитсен» (чӗлхи кӑвар пек тени Çеçпӗлччен сивлесе калама юрӑхлӑ пулнӑ) т. ыт. те. Тепрер чух сӑнарлӑ çыхӑну энантиосеми патне çитсе тӑрать, пач çыхӑнма пултарайман ӑнлавсене пӗр тӗвве çыхать: «ирхи кун»; «каçхи кун»; «чӗри пултӑр кӑвар»; «кӑварлӑ хӗлхем çӗре чечекленӗ»... Сӑмахсем кунашкал синтаксисра символла пӗлтерӗш тупаççӗ, хӑйсен пӗлтерӗшӗн — сӑнарлӑх (коннотаци) никӗсне пуянлатсах пыраççӗ. **Кун** сӑмахах, авӑ, анлӑ, метафорӑллӑ, символла сӗмпе илемлӗ: Çӗнӗ Кун, Каçхи Кун, Ирхи Кун... Кашни хутӗнчех вӑл эпоха, историллӗ тапхӑр пӗлтерӗшлӗ, анлӑ контекста тивӗçес ытарлӑ. **Çӗнӗ** сӑмаха та çаплах тӗсесе пӑхма юрать: «Çӗнӗ Тӗнче», «çӗнӗ сывлӑш», «çӗнӗ тӗнче кӑварри»... Сӑмах-сӑнар ретне вырнаçнӑ кунашкал тӗслӗхсем нумай поэт лирикинче: **Чӗлхе, Юн, Хӗвел, Кӑвар, Çун, Каç, Тӗнче, Çӗр-шыв, Çӗнӗ** т. ыт. те. Кашни хӑйне евӗр поэзи контексчӗ йӗркелет, сӑнарлӑхӑн Çеçпӗл лирикинчи пӗтӗмӗшле грамматикине калӑплать. Грамматики вара — тӗпрен кӗтмесле, çине тӑруллӑ, пулас культурӑшӑн çӗнелме тивӗç грамматика.

Сӑвӑсен поэтики пӗр Сӑмахсӑнартан теприн патне куçса пырать, фраза хӑйне евӗрлӗхне улӑштарать, предложенисене пӗрин хыççӑн теприне сыпать, период ӑсталать. Синтаксисӑн кунашкал екки сӑмахсене ӑнсӑртран кӗмсӗрт пек çыхӑнма «илӗртет», предложенисене логикӑран расна принципсене хывса калӑплама хистет: «Чӑваш чӗлхи, çӗлен сӑххи (? — Г. Ф.), Хаяр аçа çапнин уххи Пулса кӗр çӗн ӗмӗре»; «Чӑваш чӗри!.. Ылтӑн шӑратан Хуран пек чашкӑрса (? — Г. Ф.) вӗре» («Чӑваш! Чӑваш!..»); «Вӗре, вутлӑ юн», «кивӗ çӗр кукарри» (? — Г. Ф.) («Шӑршлӑ каç йывӑрри»). Синтаксис çапла тӗш сӑмсалантарни, паллах, Сӑмахӑн сӑнарлӑ вӑрттӑнлӑхӗнчен килет. Çеçпӗл вара çав вӑрттӑна сӑмах майлашӑвӗпе предложени, периодпа абзац тытӑмӗшӗн ӗçлеме кӳлет. Нимӗнле вӑйпа та чарма, пӳлме çук вӑй туртать сӑвӑçа малаш куна. Ку техӗм поэзи синтаксисне çӗнетме йыхӑрать поэта, лирикӑра халиччен тӗл пулманла хевте тупма тар тӑкать художник: Иртни панорамӑллӑн, васкавсӑр, хӑйӗн нӗртте еккипе тухать поэт куçӗ умне, хальхи вӑхӑчӗ ӑна ӳкӗнӗçпе шанӑçсӑрлӑх енне туртать, Ыранхи çап-çутӑ кӑвар хӗлхемӗпе астарать, шухӑш таппи вара шӑпах çав Ырана кӗтнипе вӗриленет, хивреленсе пырать. Куна пула, чӗнӳллӗ, ыйтуллӑ риторика мелӗсем тӗпе килеççӗ, чӑваш пурнӑçӗн иртнипе пулассине куçа-куçӑн тӑратса шайлаштараççӗ.

«Чӑваш ачи! Сассуна пар!» — чӗннӗ хавхаланса «кӑвар чӗреллӗ», тӗнче, наци культурине пин сӗвемлӗн, йӳçӗллӗ-тутӑллӑн ӑша илнӗ, хӑй кун-çулне пысӑк мисси пек туйнӑ сӑвӑç. Сасӑ парса, аслӑ поэтӑмӑр шанӑçне тӳрре кӑларса пӗтертӗмӗр-ши эпир?! Çук пулӗ.

«Инçе çинçе уйра уяр
Карталанса чӑлтӑртатать,
Енчен енне çупса чупать...»

Унта, çав инçетре «Хӗвел хӗлхемлӗ хӗлӗхсем Çитмӗл çич чӗлӗхлӗн янраççӗ...» Хӑй шухӑшне нумай пӑнчӑ лартса вӗçлерӗ генилле поэт. Эппин чӑваш культурин малашӗ аслӑ-ха!..